Çĕнтеруӳ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнченпе тухать

29 (7561) № ✻ Юн кун, 2008 çулхи апрелĕн (ака) 16-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Республикăра

Кардиохирург ăсталăхĕпе паллаштарчĕ

Иртнĕ эрнере пирĕн республикăра Раççей медицина наукисен академийĕн чĕре тата юн тымарĕн хирургийĕн А.Н. Бакулев ячĕллĕ наука центрĕн директорĕ Лео Бокерия пулчĕ. Вăл республикăри кардиологи центрĕнче виçĕ пациента операци тунă.

– Вырăнти специалистсене хамăр операци мĕнле тунипе паллаштарма шутларăмăр. Хирургсен питĕ сумлă бригадипе çитрĕмĕр, пĕрремĕш класлă супер-медсестрасем, ертсе пыракан анестезиолог, реаниматолог килчĕç. Пирĕн нумай çулсем пуянланнă практика вырăнлă пулмалла,- тенĕ паллă хирург. Вăл пирĕн кардиологи центрне пысăка хурса хаклана. Кунта пĕтĕмпе 400 ытла операци тунă.

Бюджета – 3,9 миллиард тенкĕ

ЧР Президенчĕ Николай Федоров лару ирттернĕ, унта финанс министрĕ Николай Смирнов Президент 2008 çулта ЧР Патшалăх Канашне янă «Малашлăхшăн паян ĕçлетпĕр» Çырура палăртнă тĕллевсене пурнăçлани çинчен каласа панă.

Президент çĕнĕ тĕллевсене пурнăçланин меслечĕсене ырланă.Çитес кунсенчех ЧР Патшалăх Канашне 2008 çулхи республика бюджечĕ çинчен калакан саккуна улшăнусем кĕртесси çинчен саккун проекчĕ çитĕ. Бюджет тупăшĕсене, тăкакĕсене тата 3,9 млрд. тенкĕ ӳстерĕç.

Пĕтĕмĕшле илсен çулталăк пуçланнăранпа республика бюджетне 5,75 миллиард тенкĕ укçа кĕнĕ.

Герман Грефпа тĕл пулнă

Тунти кун ЧР Президенчĕ Николай Федоров Мускавра РФ Перекет банкĕн правленийĕн президенчĕпе, председателĕпе Герман Грефпа тĕл пулнă.

Каласу вăхăтĕнче Раççей Перекет банкĕ Чăваш Енри пысăк промышленноç предприятийĕсене модернизацилессине анлăрах хутшăнассипе тата республика территорийĕнче çĕнĕ производствăсем тăвассипе сыхăннă ыйтусене сӳтсе явнă.

Перекет банкĕ республикăри пурăнмалли çурт-йĕр строительствин калăпăшне ӳстерессипе сыхăннă проектсене пурнăçлама хутшăнас ыйтăва та пăхса тухнă.

Çырăнтару – 2008

«Çĕнтерӳ ялавне» малалла çырăнтараççĕ

Район хаçатне 2008 çулхи иккĕмĕш çур çулта илсе тăма малалла çырăнтараççĕ.

Ултă уйăха çырăнса илмелли çĕнĕ хак - 181 тенкĕ те 80 пус. Малтанхипе танлаштарсан райхаçата ултă уйăха çырăнса илмелли хак 12 тенкĕ те 18 пус çеç ӳсрĕ.

Ĕç çи – 2008

Хирти пĕрремĕш çаврăмсем

Сĕнтĕрте пурăнакан хресчен (фермер) хуçалăхĕн ертӳçипе Владислав Валерьевич Бархаткинпа хирте тĕл пултăмăр. Хире илсе тухнă ака агрегатне акма майлаштаратчĕç вĕсем. Мĕншĕн вĕсем-ха? Мĕншĕн тесен Василий Александрович Толстовпа Владимир Геннадьевич Блинов механизаторсем те ку хуçалăхрах тăрăшаççĕ. Виççĕшĕ те сеялкăн вăрлăх акмалли нормине йĕркелесе лартассипе тимлетчĕç.

– Çĕр пулса кайрĕ, васкас пулать. Ĕнер 40 гектар йышăнакан ку уйра культиваци тăвас ĕçсене вĕçлерĕмĕр. Унччен вара çĕртме лаптăкне пĕтĕмпе 100 гектар сӳрелесе нӳрĕке хупласа хăвартăмăр. Паян урпа акма тытăнасшăн,– пĕлтерчĕ Владислав Валерьевич.

Фермерăн ĕç-пуç япăх пымасть. Çурхи ака-сухана тĕплĕн хатĕрленни сисĕнет. Удобренисене те кирлĕ чухлĕ турттарса янтăланă, техника енчен те кăлтăксем çук.

– Маттурсем ĕçлеççĕ ман патра. Василий Александровичпа Владимир Геннадьевич механизаторсене ӳпкелесе нимĕн те калама пултараймастăп. Ответлăха çирĕп туяççĕ. Çирĕплетсе панă «хурçă утсене» те, кăкарса ĕçлемелли техника хатĕрĕсене те ĕç çи валли тĕплĕ тата вăхăтра хатĕрлесе çитерме пултарчĕç,– савăнăçне пытармасть фермер.

Кăтартусем те çавна çирĕплетеççĕ. Çур акине кустăрмаллă 2 тракторпа хутшăнаççĕ пулин те, çак вăхăта 3 трактор ĕç çине хатĕр. 100 гектар лаптăк çинче пĕтĕмпех нӳрĕке хупласа хăварнă. 23 гектар çинчи кĕрхи тулă лаптăкне те сӳрелесе тухнă, минераллă удобренисемпе апатлантарнă. 50 гектар нумай çул ӳсекен куракене сӳрелес

ĕççене вĕçленĕ ĕнтĕ. Пĕтĕмпе вара кăçал çур акинче урпа 80 гектар акса хăварма, çĕр улми 50 гектара яхăн лартма палăртать фермер.

Владислав Валерьевич паянхи йывăрлăхсене те асăнмасăр иртмерĕ. Уйрăмах çĕнĕ техника туянассипе çăмăл мар. Хаклă вăл. Кивĕ техникăпа кăна ĕçлесен те май çук. Вăл часах ванать, запас пайсем туянсах çука юлма та пулать. Удобренисем те хаклансах пыраççĕ. Юрать-ха юлашки вăхăтра патшалăх енчен ял хуçалăхĕ çине ытларах тимлĕх уйăрма тытăнни сисĕнет. В.В. Бархаткин та кустăрмаллă çĕнĕ тракторсене, ДОН-1500 комбайна та лизингпа, «Газель» автомашинăна хушма хуçалăхсене аталантарма уйăракан кредитпа туяннă. Анчах панине илме пулать те, анчах ăна пĕтĕмпех тӳлесе татас пулать вĕт-ха.

Оптимистла шухăшлама хăнăхнă В.В. Бархаткина вара куыйту мар, çурхи ĕçсене пахалăхлă та вăхăтра туса ирттересси шухăшлаттарать паян ытларах.

– Паян пирĕн тĕллев çурхи ĕççене кирлĕ шайра ирттересси, ял хуçалăх культурисене пăхса тăрассине йĕркелесе пырасси. Ун чухне вара, кĕркунне çитсен, мĕн аксалартса хăварнине йĕркеллĕ пухса кĕртсен, парăмсене татма та майсем ытларах пулĕç, тупăш та тухĕ,– тет вăл.

Мĕнех хушса калăн кунта 10 çула яхăн каялла çак ĕçе кӳлĕннĕ çĕр ĕçченĕн сăмахĕсем çумне.

Акă ака агрегачĕ те вырăнтан ерипен хускалчĕ. Кăпăшка çĕре вăрлăх варăнма тытăнчĕ – кĕрхи тухăç никĕçĕ.

В. ШАПОШНИКОВ.

Сăн ӳкерчĕксенче: В.В. Бархаткин (сăн ӳкерчĕкре сулахайри) В.А. Толстов тата В.Г. Блинов механизаторсен ĕçĕпе кăмăллă; акă вĕсем – пĕрремĕш гектарсем.

Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.

Район уй-хирĕсенче

Районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче çурхи уй-хир ĕçĕсем тытăнчĕç. Ĕнерхи кун тĕлне районĕпе кĕрхи культурăсене 2662 гектар çинче (49,9 процент), нумай çул ӳсекен куракене 3785 гектар (39 процент), çĕртме пуссисене 2615 гектар (32 процент) сӳрелесе нӳрĕке хупласа хăварнă, кĕрхи культурăсене 2651 гектар (49,7 процент), нумай çул ӳсекен куракене 3673 гектар (37,8 процент) минераллă удобренисемпе апатлантарнă, çурхи культурăсем акма 881 гектар (6,6 процент) культиваци туса çĕр хатĕрленĕ. «Свобода» хуçалăхра çак вăхăта 200 гектар (32 процент) çĕр хатĕрленĕ, 50 гектар тулă тата 150 гектар урпа акнă.

Район администрацийĕнче

Тава тивĕçлĕ ĕçшĕн

Район администрацийĕн пуçлăхĕн 2008 çулхи мартăн 12-мĕшĕнчи йышăнăвĕпе район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă

Район экономикипе социаллă пурнăçне тивĕçлĕ тӳпе хывнăшăн тата активлă обществăлла ĕçшĕн:

Иван Ермогенович АНИСИМОВА, «Ударник» хуçалăх водительне;

Светлана Вячеславовна АНИСИМОВАНА, «Свобода» хуçалăх ĕçченне;

Наталия Вячеславовна БОРЗАЕВАНА, Шурча шкулĕн вĕрентекенне;

Олег Данилович ЕФАНОВА, Муркаш шкулĕн директорĕн çумне;

Валентина Юрьевна ПУШКОВАНА, район администрацийĕн экономика пайĕн ертсе пыракан специалистне;

Михаил Григорьевич СТЕПАНОВА, Ильич яч. хис. хуçалăх водительне;

Алина Валериановна КИРИЛЛОВАНА, районти шалти ĕçсен пайĕн инспекторне, милици лейтенантне;

Надежда Иосифовна ЯРДЫКОВАНА, Муркаш почтамчĕн инспекторне.

Ял хуçалăх производствинче нумай çул ăнăçлă ĕçленĕшĕн тата активлă обществăлла ĕçшĕн:

Леонид Яковлевич КОЛЬЦОВА, Е. Андреев яч. хис. хуçалăх водительне;

Галина Александровна НЕВОЛИНАНА, Е. Андреев яч. хис. хуçалăх сысна пăхаканне.

Республика кунĕ умĕн

Ĕççене вăхăтра тумалла

Республика кунне хатĕрленсе кашни ял тăрăхĕнчех тавраpи вырăнсене тирпейлессипе тимлеççĕ. Чуманкасси ял тăрăхĕнче ĕçсем мĕнле пынине ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Л.Г.Ковалева каласа пачĕ:

– Малтанах Республика кунне пирĕн районта ирттерни пире тата ытларах тимлесе ĕçлеме хистет тесе каласшăн эпĕ. Çавăнпа та эпир çитес вăхăтрах пирĕн ялсенчи палăксен умĕнчи тата кантур умĕнчи чечексен клумбисене йĕркене кĕртсе илемлетесшĕн. Тирпей-илем кĕртме уйăрса пана укçапа пĕчĕк юсав ĕçĕсене те ирттерме май пулать. Тĕслĕхрен, Отаркка ялĕнчи хапхасене çĕнетмелле, масар çинче те юсаса çĕнетмеллисем пур. Анаткас Апаш ялĕнче карта тытса илемлĕ канмалли вырăн йĕркелесшĕн. Ку ĕçсем пирки эпир вырăнти депутатсемпе пухăнса калаçса ялсенче пухусем ирттерме палăртрăмăр.

Пирĕн ял тăрăхĕ витĕр Ваçкассине çитмелли трасса иртет. Юр айĕнчен çак çул хĕррисенче выртакан çӳп-çап сахал мар тухрĕ. Ăна пуçтарма эпир паян-ыранах тухасшăн, шкул ачисене те çакăнта явăçтарасшăн. Пур ĕçе те кая юлмасăр тăрăшса тумаллине пурте ăнланаççĕ пуль тетĕп.

Шкулта, садикре, ытти учрежденисемпе предприятисенче субботниксем иртеççĕ. Ялсене тирпей-илем кĕртессипе те ĕçсем пуçларăмăр. «Чи илемлĕ картиш» тата «Чи таса урам» конкурссем пуласса ялсенче пĕлеççĕ. Çапла çынсен тăрăшулăхĕ те пысăкланасса шанатпăр.

Н.НИКОЛАЕВА.

Ыр кăмăллăх марафонĕ пырать

Айккинче тăрар мар

«Ачалăх ячĕпе, йăлтах ачалăхшăн» ыр кăмăллăх марафонĕ районта малалла пырать. Районти чылай предприятипе организаци марафон уçăлнă хыççăнах ятарлă счет çине укçа куçарчĕ. Çавăн пекех хăйсем туса кăларакан продукцисемпе пулăшакан предприятисем те, ача япалисемпе, укçан пулăшакан уйрăм çынсем те пулчĕç. Вĕсен ячĕсемпе сире хаçатăн иртнĕ номерĕнче паллаштартăмăр. Çак кунсенче ятарласа уçнă 06974120035 номерлĕ счет çине «Ударник» хуçалăх 10 пин тенкĕ укçа куçарса пачĕ. Çапла вара паянхи кун тĕлне марафон счечĕ çине 48141 тенкĕ укçа пуçтарăнчĕ.

Предприятисемпе организацисен, учрежденисен ертӳçисем, предпринимательсем, районта пурăнакан уйрăм çынсем! Ыр кăмăллăх марафонне хутшăнмасăр ан юлăр. Хамăр ачалăха куç умне кăларар-ха: пĕтĕм ĕмĕт пурнăçланайрĕ-и хамăрăн? Çук вĕт. Апла пулсан айтăр-ха пĕр ачана та пулин пĕр пĕчĕк ĕмĕтне те пулин пурнăçа кĕртме пулăшар. Тен, эсир хывнă 100 тенкĕ е кăшт тăхăнкалана тумтирпе атă-пушмак уншăн тем пысăкăш савăнăç пулĕ. Эппин, паян пирĕнпе юнашарах пулăшу кирлĕ ачасем пуррине асра тытар, вĕсен нушине курмăш пулас мар. Çынна ыр туни вара ырăпах таврăнать. Укçа-тенкĕне ятарлă счет çине куçарма пултаратăр, япаласемпе пулăшас тетĕр пулсан, вĕсене районти социаллă хӳтлĕх пайне е ял тăрăх администрацине илсе пымалла. Ырă ĕçсен çулталăкĕнче ырă ĕçсем ытларах тăвасчĕ.

Л.ПАВЛОВА.

Информаци кунĕ

Ял çыннисемпе тĕл пулаççĕ

Паян районта пĕрлехи информаци кунĕ иртет.

ЧР Патшалăх ветеринари службин пуçлăхĕ В.К. Тихонов ертсе пыракан ушкăн паян Çатракасси ял тăрăхĕнчи, РФ Пенси фончĕн республикăри уйрăмĕн пуçлăхĕ Р.А. Кондратьева ертсе пыракан ушкăн Муркаш ял тăрăхĕнчи, суд экспертизин республикăри лабораторийĕн пуçлăхĕ Л.П. Морозов ертсе пыракан ушкăн Йӳçкасси ял тăрăхĕнчи ĕç çыннисемпе тĕл пулаççĕ.

Вулакансене пĕлме

Паянхи номерте – хушма кăларăмсем

Паян ял тăрăхĕсен хушма кăларăмĕсем пичетленеççĕ. Вĕсенче ял тăрăхĕсен Уставĕсене кĕртнĕ улшăнусемпе хушăмсем пичетленеççĕ.

Хушма кăларăмсемпе ял тăрăхĕсен администрацийĕсенче паллашма пулать.

Юбилей

Саламлатпăр

Юратнă мăшăра, аттене, кукаçине – Отаркка ялĕнчен пурăнакан **Геннадий Борисович КИРИЛЛОВА** ака уйăхĕн 14-мĕшĕнче 55 çул тултарнă ятпа ăшшăн, чĕререн саламлатпăр.

Утас çулу такăр пултăр, ĕмĕтленнĕ ĕмĕтӳсем пурнăçланса пыччăр, пире 5 ачине тĕрĕс çул çине тăма пулăшнăшăн тав сăмахĕ каласшăн эпир сана, аттеçĕм.

Салампа мăшăрĕ, 5 хĕрĕ, 5 кĕрӳшĕ тата 8 мăнукĕ.

Хаклă çыннăмăра, юратнă мăшăрăма, ырă кăмăллă аннене, йăваш сасăллă кукамая, мамака, тăхлача, хисеплĕ тăвана – Çатракасси ялĕнче пурăнакан **Любовь Зиновьевна СТЕПАНОВАНА** 50 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн хисеплесе ăшшăн саламлатпăр.

Тавах сана ытарайми ырă кăмăлушăн, чун ăшшине ним хĕрхенми парнеленĕшĕн. Сывлăху сан çирĕп пултăр, чир-чĕр мĕнне ан пĕлтĕр. Ачусен, мăнуксен ырлăхне курса савăнмалла пултăр. Эпир сана юрататпăр, тав туса сан умăнта çĕре çити пуç таятпăр.

Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ывăлĕсемпе кинĕсем, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, мăнукĕсем, хăти-тăхлачисем, тăванĕсем, кӳршисем.